

Индеец хăйĕн ĕмĕлкине çухатнă. Ачасем, ăна ĕмĕлке шыраса тупма пулăшăр-ха.





Шалти тăваткалсенчен хăшĕ пысăк — хури е шурри?

Çак тăваткал уя кашни кушака пĕр пек ĕлкеллĕ /формăллă/ тата лаптăкăш пулмалла тӳрĕ йĕрсемпе пайламалла.

## ЭПИР ÇАПЛА ÇЫРАТПĂР

- Сывă-и, тусăм? Сывă пулсан чирлеместĕн те пуль?
- Хĕрарăмсем аллисемпе, чĕркуççипе юр тăрăх утаççĕ.
- Хĕрарăмсем питне картласа юршăна аран-аран утаççĕ.
- Лашан хырăмĕ юра лектерсе пырать.
- Юр çуса, çил вĕрсе те юлчĕ.
- Пăши питĕ хăлхаллă, куçлă чĕр чун.
- Хĕвел пĕлĕт ăшне пытанчĕ те тĕтĕм пулса ларчĕ.
- Юр пĕрчисем çаврăна-çаврăна ӳкеççĕ. Вĕсем юр ăшне хырăм таран кĕрсе ларнă.
- Вăрман хушшинчен çунапа лаша иртсе кайрĕ.
- Хĕрарăмсене çил-тăман çавăрса ярать.
- Пăши мăйраки икĕ туратлă.
- Иксĕмĕр çухалса каяс тесе çухăрса утрăмăр.
- Чăваш чĕлхинче çĕр-пин сăмах пур, вĕсенчен пĕринче — Ашмаринăн.
- Коля пытанса хăйĕн пăшалне пăшисем çине тăратса печĕ.
- Чылай çывăхри хырлăх.
- Хăватлă сăмах вăл питĕ хитре. Тăнлă çынсем çак сăмахсене чĕрере тытаççĕ.
- Чăвашсем туйра, ĕçре тата ытти уявсенче юрланă.
- Сасартăк пăшал сасси илтĕнчĕ. Икĕ хут персен вăл вĕлернĕ сасă пулать.
- Туй сăмахлăхĕнче жаргон, диалект, урăх чĕлхе сăмахĕ нумай.
- Пирĕн халăх çĕр пин сăмах ытла шӳтлесе кăларнă.
- Яковлев вырăс чĕлхинчен чăваш чĕлхи çине библии çырса куçарнă.
- Пăши çил-тăманлă çанталăкра шăнса вилмен.

*Маша РОДИОНОВА*
*пухса хатĕрленĕ*
*Калайкасси шкулĕ,*
*5 класс*

**ÇИТЕС НОМЕРТЕ:**

- ÇĔНĔ ÇУЛ — истори тата паянхи йăла
- 2007 çулхи гороскоп
- Телейлĕ юрату вăрттăнлăхĕ

1. Пысăк аркату кӳрекен тайфун /циклон/ варринчи лăпкăлăх тăрăхне мĕн тесе калаççĕ?
2. Якоб Роггевен Голланд тинĕс çӳревçи 1722 çулхи ака 6-мĕшĕнче, пысăк тĕн уявĕн кунĕнче, Лăпкă океанăн кăнтăр енĕнче утрав уçать, çак уяв ятне парать. Çакă мĕнле утрав?
3. Çак кӳлĕри шыв Азов тинĕсĕнчи шывран калăпăшĕпе 92 хут, Арал тинĕсĕнчи шывран 23 хут ытларах, Балт тинĕсĕнчи шывпа вара тан. Çӳлтен пăхсан именчĕклĕ, бумеранг евĕр курăнать. Çакă мĕнле кӳлĕ?
4. Çĕр чăмăрĕ çинчи чи анлă сарăлнă минерал?
5. Çĕр чăмăрĕ çинчи чи тулли шывлă юханшыв?
6. Çак виçĕ цифрăран пирĕн планета диаметрĕпе килĕшсе тăраканне суйласа илĕр:
   17 652 км, 24 850 км, 12 742 км
7. Мĕнле çĕршыв çыранĕ çумĕнче чи хăвăрт тинĕс юхăмĕ пур?

*ХУРАВСЕМ:* 1. Циклон куçĕ; 2. Пасха утравĕ; 3. Байкал кӳлĕ; 4. Кварц; 5. Амазонка юханшывĕ. Унăн бассейнĕн лаптăкĕ 7 миллион тăваткал метр; 6. 12 742 м — çĕр чăмăрĕн диаметрĕ; 7. Норвеги çыранĕ çумĕнче сехетре 30 км хăвăртлăхпа Солтфиорд юхăм юхать.




Çак сăмахсем валли пĕтĕмĕшле пуçламăш тупăр.

$$2^{2^2}$$

Виçĕ 2 паллă усă курса миçе цифра çырма пулать?

***Хурав:*** 16 /2 2-мĕш степенре тата 2-мĕш степенре/ 222; 484 /22 2-мĕш степенре/ 4 194304 /2 22-мĕш степенре/



Саспаллисем куçарса йытă ăратне шыраса тупăр.

АКТ + АС
КОЛ + ИЛ
ГЛУБ + ДЬО
ВЕРТЕЛ + РОЙ
ПУД + ЛЬЕ
ОКНО + БАЛ



Виçĕ тӳрĕ йĕрпе шăрчăксене пĕр-пĕринчен уйăрăр

Пĕр цифра куçарса çак танлăха тĕрĕс тăвăр.

*62–63 = 1*




Хаçата «Чăваш Ен» ПУП ИПК пичетленĕ. Адрес: Шупашкар хули, Ив. Яковлев пр., 13-мĕш çурт. Тираж: 999 экз. Заказ:

Редакци адресĕ: 429541, Чăваш Республики, Муркаш районĕ, Калайкассинчи вăтам шкул. Хаçата шкулăн компьютер класĕнче калăпланă. *электрон адресĕ:* interhypar@mail.ru

Бильд-редактор: Александр Степанов.
Тĕп редактор: Владимир Кожевников.
Редактор çумĕ: Эльвира Портнова. Корреспондентсем: Лариса Осипова, Таня Шарикова, Оля Кошкина, Оля Аксяндарова

*Кайри мала!*

# ХЫÇАЛТИ ПАРТА

# 2(02) 2006

*Шкул ачисен хаçачĕ* — Раштав 7-мĕшĕ — раштав 21-мĕшĕ

## ИНÇЕТЕ ВĔÇТĔР «САРКАЙĂК»



**Муркаш çĕрĕ çинче, вĕренекенсем хушшинче, чăваш халăх юррисене юрлакансен конкурсĕ иртрĕ.**

Çакăн пек мероприяти пĕрремĕш хут пулчĕ. Чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче Кашмаш клубĕне нумай халăх пуçтарăнчĕ: куракансем, ашшĕ-амăшĕ, вĕренекенсем. Конкурса хутшăнма 12 районти вырăнти конкурссенче çĕнтернисем тивĕçлĕ пулчĕç. Вĕсен 2 халăх юррине акапелла юрламалла пулчĕ. Лауреат тата «Гран-при» ята çĕнсе илме 27 юрăç пĕр-пĕринпе тупăшрĕç.

Конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх, Каçал, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Çĕрпӳ, Вăрнар, Элĕк, Етĕрне, Елчĕк, Шупашкар, Муркаш районĕсенчи 10 юрăçа Лауреат ята пачĕç. 17 конкурса хутшăнакан Дипломант пулса тăчĕ. «Гран-при» — Оринино шкулĕнче вĕренекен Наталья Каликова çĕнсе илчĕ.

Конкурса çулсерен ирттерме палăртнă.

## ШКУЛ САЙЧĔСЕН КОНКУРСĔ СТАРТ ИЛЧĔ

**Чӳк уйăхĕн вĕçĕнче Атăлçи федераци округĕнче уникаллă проект — пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисен Интернет сайчĕсен регионсем хушшинчи конкурсĕ уçăлчĕ.**

Çак конкурсра пур шкул та хутшăнма пултарать. «Вĕрентӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн 2008 çул тĕлне Раççейри пур шкул та «тĕнчери танатапа» çыхăнмалла. Çак конкурс паянхи информаци технологисене алла илме, вĕрентӳ заведенийĕсем çинчен калакан информаци хатĕрĕсене аталанма, информатизаци рольне пысăклатма пултарни каламасăрах паллă.

Конкурса йĕркелекенсем ăна 4 номинацие пайланă: чи лайăх шкул сайчĕ, чи информативлă сайт, чи оригиналлă дизайн, чи интерактивлă сайт. Уйрăм приз чи лайăх сайта йĕркеленĕ шкул ачине пулĕ. Ĕçсене кăçалхи раштав 18-мĕшĕччен конкурса тăратма пулать.

## ОЛИМПИАДĂСЕМ ИРТРĔÇ

**Чӳк уйăхĕнче Муркашра район шайĕнчи олимпиадăсем иртрĕç. Шкул ачисем валли ку хăйне евĕр тĕрĕслев пулчĕ. Ăслă та хастар вĕренекенсем ыйтусене хĕвелçаврăнăш пек шĕкĕлчерĕç, йывăр зĕçсем умĕнче те нумай тытăнса тăмарĕç, вĕсене туххăмрах пурнăçларĕç.**

Чӳк уйăхĕн 19-мĕшĕнче физкультурăпа олимпиада иртрĕ. Унта пирĕн шкул ачисем хастар хутшăнчĕç. 9-мĕш класра ăс пухакан Кожакова Настя 2-мĕш вырăн йышăнчĕ, 10 С класри Глазунов Альбертпа Перкова Лена та хăйсене лайăх енчен кăтартма пултарчĕç. Иванов Костя/10 П/ информатика енĕпе ăста специалист иккен, 3-мĕш вырăна тивĕçни çавна туллин кăтартрĕ. 11 педагогика класĕнчи Кузьмин Коля пĕр предметпах çырлахмарĕ, истори тата обществознани олимпиадисене хутшăнчĕ.

Вăтам класри ачасем те аслисенчен юлас темерĕç. Сăмахран, 8 А-ра вĕренекен Дима Григорьевпа Храмов Володя технологи олимпиадине хутшăнчĕç, çивĕч ăспа тата тавçăрулăхпа палăрчĕç.

Вĕренекенсем шкул ятне яманни, унăн чысне хӳтĕлени савăнтарать. Малашне те олимпиадăсене активлă хутшăнăр, ытти шкулсене ăспа, тавçăрулăхпа тĕлĕнтерĕр!



*Ӳкерчĕк çинче Дима Григорьев, Саша Дмитриев тата Володя Храмов хăйсем ăсталанă шахмат сĕтелĕ хушшинче*

*Лариса ОСИПОВА,*
*Калайкасси шкулĕ,*
*11П класс*



## КĔÇЕХ ÇĔНĔ ÇУЛ!

**ТУССЕНЕ, ВĔРЕНТЕКЕНСЕНЕ САЛАМЛАМА АН МАНĂР!**